Ирӗклӗ мелпе кӗрешесси

Пирӗн ентеш – ҫӗр-шыв чемпионки

cap.ru сӑн ӳкерчӗкӗсем

Чӑваш Енре ирӗклӗ мелпе кӗрешекен йышлӑ. Ҫавӑнпах пулӗ пирӗн республикӑра олимпеҫӗсем хатӗрлекен спорт центрӗ тума палӑртнӑ. Ҫак кунсенче Ҫӗнӗ Шупашкарти Олимп резервӗсен ятарлӑ 3-мӗш спорт шкулӗн керменӗнче хӗрарӑмсен хушшинче иртнӗ ҫӗр-шыв чемпионачӗ ку шухӑша ҫирӗплетрӗ.

♦ ЧР Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев Канаш пикине Алина Мореевӑна ҫӗнтерӳпе саламлать.

Чӑваш Енре республика чысне тӗнчери чи пысӑк ӑмӑртусенче хӳтӗленӗ хӗр сахал мар. Акӑ Ҫӗнӗ Шупашкарти Ольгӑпа Наталья Смирновсем тахҫанах ят-сум ҫӗнсе илнӗ. Пӗр тӑвансем республикӑри, ҫӗр-шыври тӗрлӗ ӑмӑртура палӑрнӑ, Европа тата тӗнче чемпионачӗсен пьедесталӗ ҫине темиҫе хут хӑпарнӑ. Ольга 2008 ҫулта Олимп вӑййисенче бронза медаль ҫӗнсе илнӗ, халӗ вӑл – 1-мӗш спорт шкулӗн тренерӗ. Наталья – Раҫҫейӗн пӗрлештернӗ командин аслӑ тренерӗ. Ҫавӑн пекех Европӑн пилӗк хут чемпионки Наталья Гольц, Пӗтӗм тӗнче Универсиадинче виҫҫӗмӗш вырӑн йышӑннӑ Екатерина Краснова, юниорсен хушшинче иртнӗ тӗнче тата Европа ӑмӑртӑвӗсенче ҫӗнтернӗ Надежда Федорова, ирӗклӗ мелпе кӗрешекен тата ытти пике спорт аталанӑвне пысӑк тӳпе хывнӑ.

Чӑваш Енре пӗрремӗш хут иртнӗ ӑмӑртӑва ҫӗр-шыври 22 регионтан килнӗ 110 спортсмен хутшӑннӑ. Вӗсене республика Пуҫлӑхӗ Михаил Игнатьев саламларӗ. "Чӑваш Енре спорта аталантарас тӗллевпе чылай ӗҫ пурнӑҫланать, ҫынсен сывлӑхне ҫирӗплетме те услови ҫителӗклех. Ҫӗнӗ объектсем ҫӗкленеҫҫӗ, кивӗсене юсаса хӑтлӑлатаҫҫӗ. Паянхи ӑмӑрту та республикӑри чи пысӑк керменте иртет. Ирӗклӗ кӗрешӳ – вӑйлисен вӑййи, унта паттӑррисем кӑна ҫӗнтереҫҫӗ. Хӗрарӑмсем те кавир ҫинче хастаррӑн тупӑшаҫҫӗ", – терӗ вӑл. Михаил Васильевич спортсменсене хатӗрлес ӗҫре пысӑк ҫитӗнӳсем тунӑ ҫамрӑк тренера Светлана Константиновнӑна "Чӑваш Республикин тава тивӗҫлӗ тренерӗ" ята тивӗҫнине ӗнентерекен удостоверени пачӗ. Кӗрешӳҫӗсене ҫавӑн пекех Раҫҫей спорт кӗрешӗвӗн федерацийӗн президенчӗ, Олимп чемпионӗ Михаил Мамиашвили, РФ пӗрлештернӗ командин тӗп тренерӗ Юрий Шахмурадов, ЧР ирӗклӗ мелпе кӗрешекенсен федерацийӗн ертӳҫи Алексей Лапшин ӑнӑҫу сунчӗҫ.

Спортсменсем сакӑр виҫере тупӑшрӗҫ, вӗсенче чи пултаруллӑ та маттур кӗрешӳҫӗсем мала тухрӗҫ. Палӑртма кӑмӑллӑ: 48 килограмлисен ушкӑнӗнче пирӗн ентеш, халӗ Брянск облаҫӗнче пурӑнакан Алина Мореева /Анисимова/ ҫӗнтерчӗ. 25-ри пике Канаш районӗнчи Шӑхасанта ҫуралса ӳснӗ, районти ачасемпе ҫамрӑксен спорт шкулӗнче тата Шупашкарти Олимп резервӗсен ятарлӑ 5-мӗш спорт шкулӗнче ӑсталӑха туптанӑ, Олимп резервӗсен училищинче пӗлӳ илнӗ. Вӑл – Раҫҫей тата Европа ӑмӑртӑвӗсен ҫӗнтерӳҫи, ҫӗр-шывӑн икӗ хут чемпионки. Пӗлтӗр Ҫӗнӗ Шупашкарта иртнӗ ҫӗр-шыв кубокӗнче те Алина чемпион ятне тивӗҫнӗччӗ. "Спортсменшӑн кашни ҫӗнтерӳ питӗ пӗлтерӗшлӗ. Эпӗ те паянхи ӑмӑртупа кӑмӑллӑ. Чемпионат тӑван енре иртни хавхалантарать, вӑй-хӑват хушать", – терӗ тӗнче чемпионатне хутшӑнма ӑнтӑлакан Алина. Финалта пирӗн ентеш ҫӗр-шыври чи вӑйлӑ спортсменкӑпа, Кемӗр облаҫӗнчи Валерия Чепсараковапа тупӑшрӗ.

РФ пӗрлештернӗ командин тӗп тренерӗ Юрий Шахмурадов каланӑ тӑрӑх – ӑмӑрту ҫӗнтерӳҫисем тӗнче чемпионатне хутшӑнӗҫ, ҫывӑх кунсенче спортсменсем сбора тухса кайӗҫ, унта тӗнче турнирне хатӗрленӗҫ.

■ Андрей МИХАЙЛОВ

Пултаруллисене чысланӑ

Ачасене хӳтӗлемелли пӗтӗм тӗнчери кун умӗн Патӑрьел районӗнче «Объективра – ҫемье» ҫамрӑк ҫемьесен хушшинче йӗркеленӗ сӑн ӳкерчӗксен конкурсне пӗтӗмлетнӗ. Унта Тури Туҫа, Нӑрваш Шӑхаль, Ҫӗнӗ Ахпӳрт, Шӑнкӑртам, Тӑрӑн, Патӑрьел, Тутар Сӑкӑтӗ ял тӑрӑхӗсенчи ҫемьесем хастар хутшӑннӑ.

«Манӑн ҫемье – манӑн шанчӑк» номинацире Нӑрваш Шӑхальти Груздевсем ҫӗнтернӗ. «Объективра – эпир» номинацире Патӑрьелти Скворцовсен сӑн ӳкерчӗкӗ ыттисенчен ӑнӑҫлӑрах тесе палӑртнӑ. «Ашшӗн дебючӗ» номинацире Патӑрьелти Арлановсен ҫӗнтернӗ. Ҫӗнтерӳҫӗсене пурне те асӑнмалӑх парнесемпе хавхалантарнӑ.

Р.ВОЛЬНАЯ.

реклама пӗлтерӳ

ЗАВОД ООО «ЖБК-2»
ОТХОДЫ ДРОБЛЕННОГО БЕТОНА
ЖЕЛЕЗОБЕТОННЫЕ ИЗДЕЛИЯ ВСЕХ ВИДОВ
КЕРАМЗИТО-БЕТОННЫЕ БЛОКИ
КОЛЬЦА КОЛОДЦЕВ
БЕТОН, РАСТВОР ВСЕХ МАРОК
НЕЛИКВИДЫ ЖБИ
Телефоны: (8352) 73-74-66, 73-08-97.

ПРОДАЮ

4.Пластиковые ОКНА. Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

8.Гравмассу, песок, щебень, торф, кирп. бой, керамблок, керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

12.Профнастил, металлочерепицу, оцинковку рул., листовую, трубы профильные, водостоки, металлосайдинг. Доставка. Т. 444433.

33.Гравмассу, песок, щебень, керамзит. Д-ка. Т. 89053465671.

61.Блоки керамзитобетонные от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

66.Заборы кованые. Т. 89276689587.

73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг, водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

75. Дымоходные трубы из нерж. стали. Аргонная сварка: медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

178.Гравмассу, песок, цемент. Д-ка. Т.: 89278497675, 89278497674.

249.БРУСЧАТКУ, плитку тротуарную, керамзит, песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 89033580679.

253.КВАДРОЦИКЛ новый, бензиновый. – 35000 руб. Т. 89276689839.

295.Навоз, торф. Т. 89613383011.

317.Гравмассу, песок, щебень, керамзит, навоз. Дешево. Доставка. Т. 89278502821.

323.Песок карьерный, речной; гравмассу, щебень, керамзит, асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

341.Гравмассу, песок, щебень. Доставка. Т. 89030666630.

351.ПЧЕЛОСЕМЬИ, улья, мёд. Тел. 8-905-343-62-02.

369.Гравмассу, песок речной, карьерн., щебень. Т. 89520269954.

370.АКЦИЯ! Грабли /Турция/ пятиколесные – 26 т. р.; косилку роторную /Польша/ от 45 т. р. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

372.Песок, гравмассу, щебень, торф, навоз, керамзит. Доставка. Т.: 89603080854, 89170660480.

УСЛУГИ

250.Кровельные, фасадные работы. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

367.Печник-профессионал. Т. 8-927-862-94-85.

РАБОТА

368.Требуются: сварщики, монолитчики, арматурщики, монтажники, плотники, разнорабочие, каменщики. Проживание, питание предоставляется. Оформление по ТК, соцпакет. Тел. /8352/ 37-85-75 /"АльянсГрупп"/.

385.Требуются плотники. Т. 483900.

Ӑслӑлӑх

Чӑваш халӑхӗн сумлӑ профессорӗ

Леонид Павлович Сергеев – паллӑ чӗлхеҫӗ, чӑваш диалектологине тӗпчес ӗҫри пысӑк ӑсти, филологи ӑслӑлӑхӗсен докторӗ /1974/, профессор /1981/, РФ тата ЧР ӑслӑлӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ /1990, 2001/, К.В.Иванов ячӗллӗ Патшалӑх премийӗн лауреачӗ /1992/, Раҫҫей Федерацийӗн аслӑ професси пӗлӗвӗн хисеплӗ ӗҫченӗ /2000/, ЧР Патшалӑх премийӗн лауреачӗ /2012/. Вӑл шкул ачисемпе вӗрентекенсем валли хатӗрленӗ нумай-нумай кӗнекепе темиҫе ӑру ӗҫ пуҫса пурнӑҫ ҫулӗ ҫине тухнӑ, малашне те вӗренӳпе воспитани ӗҫӗнче ӑсчахӑн ӗҫӗсем хӑйсен пӗлтерӗшне ҫухатмӗҫ.



Л.П.Сергеев 1929 ҫулхи ҫӗртме уйӑхӗн 3-мӗшӗнче Муркаш районӗнчи Ҫурпатӑри ялӗнче ҫуралнӑ. Шӑпи пылпа ҫу хыттарсах кайман ӑна: пӗчӗклех ашшӗсӗр юлнӑ. «Манӑн пекскерсен чинне сӑмах пулман, – тет вӑл хӑйӗн ҫамрӑк мар ачалӑхне аса илсе. – Эпӗ ӑна ас тумастӑп». 1935-1939 ҫулсенче ялти пуҫламӑш, ун хыҫҫӑн Муркашри вӑтам шкулсенче ӗҫ пухать. 1945 ҫулта вӑл Чӑваш патшалӑх педагогика институтӗн литература факультетне вӗренме кӗрет. Унта Леонид Павлович тӑрӑшса вӗренет. 1948 ҫулта виҫӗ курс пӗтернӗ хыҫҫӑн Муркаш районӗнчи Тойкинтӗ шкулне чӑваш чӗлхипе литературине вӗрентме ярсҫӗ. Ҫамрӑк вӗрентекен шкул ачисен кӑмӑлне тивӗҫтерес тӗллевпе радио, фото, литература, драма кружокӗсем йӗркелет. Хастар учителе малтан директора, унтан Муркаш районӗн ҫут ӗҫ пайӗн пуҫлӑхне ҫирӗплетеҫҫӗ. Ҫак ӗҫре вӑл пӗтӗм вӑйне хурать: шкулсенче вӗрентӳпе воспитани ӗҫне лайӑхлатассишӗн те, кивӗ шкулсене юсанипе пӗрлех ҫӗнӗ ҫуртсем тӑвассишӗн те, шкул ҫулне ҫитнӗ ачасене пурне те вӗрентессишӗн те...

Ҫак тапӑҫтах ҫамрӑк педагог ӑслӑлӑхпа тӗпчев ӗҫне ытларах та ытларах туртӑнма пуҫлать, диалектологи экспедицийӗсене каякан килет, ӑслӑлӑх статйисем пичетлет. Ҫак туртӑм пулах ӑсчаха аспирантурӑна илсе ҫитерет. Ӑна пӗтернӗ хыҫҫӑн республикӑри ӑслӑлӑх тӗпчев институтне ӗҫлеме килет, филологи наукисен кандидачӗн диссертацине ӑнӑҫлӑ хӳтӗлет. Тӗпчев институтӗнче пултаруллӑ ӑсчаха вӑхӑт иртнӗ май пысӑкрах та пысӑкрах должноҫа куҫараҫҫӗ: кӗҫӗн наука ӗҫченӗ, аслӑ наука ӗҫченӗ, пай пуҫлӑхӗ...

Чӑваш чӗлхин калаҫӑвӗн уйрӑмлӑхӗсене туплин тӗпчес тесе Леонид Павлович Чӑваш Республикинче ҫитмен вырӑн хӑвармасть. Тӗрлӗ ҫулта вӑл Сарӑ ту, Пенза, Чӗмпӗр, Самар, Эрӗнтур чӑвашӗсен патӗнче пулнӑ, Тутарстан, Пушкӑрт республикисене кайса унта пурӑнакан чӑвашсен калаҫӑвне, историне тӗпченӗ. 1972-1984 ҫулсенче Леонид Павлович РСФСР Ҫут ӗҫ министерствин Наци шкулӗсен наука тӗпчев институтӗн лабораторийӗн пуҫлӑхӗнче ӗҫленӗ, чӑваш шкулӗсем валли тӑван чӗлхепе литература программисемпе учебниксем, тӗрлӗ вӗренӳ кӗнекипе пособине сахал мар хатӗрленӗ, филологи наукисен докторӗн диссертацине хӳтӗленӗ.

1979-1984 ҫулсенче пултаруллӑ ӑсчах Чӑваш лабораторийӗнче ӗҫленипе пӗрлех педагогика институтӗн пуҫламӑш класс учителӗсене хатӗрлекен факультетӗнчи студентсене чӑваш чӗлхи вӗрентет. Халӗхи вӑхӑтра Л.П.Сергеев – педагогика университетӗн чӑваш чӗлхипе литератури кафедрин профессорӗ. Студентсене тӑван чӗлхен кун-ҫулӗпе пуянлӑхне паллаштарас тесе ирен-каҫӗн ӗҫлет, аспирантсене хатӗрлет. Вӑл 15 наука кандидачӗ хатӗрленӗ. Хӑй тӑрӑшнипе уҫӑлнӑ чӑваш диалектологийӗн лабораторине ӑнӑҫлӑн ертсе пырать.

Леонид Павлович 350 ытла тӗпчев ӗҫӗн авторӗ. Чӑваш чӗлхе пӗлӗвӗнче вӑл тишкерменни йӑту сахал пулӗ. Пирӗн вӗрентекенӗмӗр фонетика, лексикологи, фразеологи, лексикографи, сӑмах пулӑвӗ, морфонологи, морфемика, морфологи тӗпчессипе нумай вӑй хунӑ, халӗ те тӑрӑшать. Эпир ӗҫтешӗмӗрӗн ҫитӗнӗвӗсемпе мухтанатпӑр, мӑнаҫланатпӑр, ӑна малалла та тулӑклӑ ӗҫлеме вӑй-хал сунатпӑр.

Леонид Павловича халалласа ҫӗртмен 3-мӗшӗнче И.Я.Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университетӗнче «XX-XXI ӗмӗрсен хутлӑхӗнчи наци чӗлхисемпе вӗсен диалекчӗсем: теори тата практика» ӑслӑлӑхпа практика конференцийӗ иртӗ.

■ Татьяна ДЕНИСОВА, ЧППУ чӑваш чӗлхипе литератури кафедрин ертӳҫи

Кун-ҫул

Амӑшӗн мухтавӗ – ывӑлӗсем

«Интернат – пурнӑҫ шкулӗ. Унта ӳсмен тӑк чемпион пулайӑттӑм-ши?» – ҫак шухӑшпа канӑҫсӑрланнӑ кире пуканӗ йӑтас енӗпе тӗнче рекордне 11 хут ҫӗнетнӗ Сергей Кириллов. Чӑнипе, ҫӗр-шыври тивӗр вӑййипе туслисен пӗрлештернӗ командин тӗп тренерӗ тӑлӑх мар. Апла пулсан РФ спорчӗн тава тивӗҫлӗ мастерӗ мӗншӗн интерната лекнӗ-ха? Ҫак ыйтӑвӑн хуравне тупас тӗллевпех Куславкка тӑрӑхне ҫитсе килтӗм.

♦ Сергей Кириллов "Хыпар" парнисемшӗн иртнӗ турнир ҫӗнтерӳҫисене призерӗсене саламлать. 2012 ҫ.

Валентина Ивановнӑпа, чемпионӑн амӑшӗпе ҫаппа чӗнеҫҫӗ, ывӑлӗн хваттерӗнче тӗл пултӑмӑр. Хӑнасене /манпа пӗрле Сергей Кирилловӑн пӗрремӗш тренерӗ Иван Краснов пычӗ/ кинемейӗ кӑмӑллӑн кӗтсе илчӗ. Ачисем аякра чухне хваттер пушӑ ларать пулин те пире вӗри чейпе тата кукӑльпе хӑналарӗ. Хӑйне вӑр-вар та хастар тыткаланӑран ҫичӗ теҫеткене ҫывхарать пулӗ тенӗччӗ, ҫук иккен. 1934 ҫулта ҫуралнӑскер кӑҫал 80 ҫулхи юбилейне паллӑ тума хатӗрленет. Ҫак куна Валентина Ивановна чӑтӑмсӑррӑн кӗтет. Ун чухне инҫетре пурӑнакан ачисем килеҫҫӗ-ҫке. Ахӑртнех, вӗсене ҫупӑрласа ыталас килет ватӑ ҫыннӑн.

Куславкка районӗнчи Мӑнкаҫырми ялӗнче ҫуралса ӳснӗ Валентина Кирилловӑн пурнӑҫӗ ҫӑмӑл килмен. Хӗр ача 7 ҫулта чухне хаяр вӑрҫӑ пуҫланнӑ, ҫавӑнпа ӑна та ытти ача-пӑча пекех телейсӗр шӑпа кӗтнӗ. Мӗн кӑна курман, мӗнле кӑна йывӑрлӑха чӑтса ирттермен пулӗ. Пӗчӗклех ял халӑхӗпе пӗрле кунӗн-ҫӗрӗн уй-хирте пилӗк авма тивнӗ. Ҫамрӑклах ашшӗсӗр юлни пӗтӗм ӗмӗт-шухӑша тӗп тунӑ. Пӗр вӑхӑт колхозра вӑй хунӑ хыҫҫӑн хӗр Куславккари автофургонсем тӑвакан завода вырнаҫнӑ.

Ҫитӗнсен те ӑна мӑшӑрпа пӗрле пурӑнма тӳр килмен. Тӑватӑ ывӑла ӳстермешкӗн хывӑртарах пулнӑ хӗрарӑма, ҫавӑнпа тӑваттӑшне те интерната вырнаҫтарнӑ. «Тутӑ, ирӗклӗ пулӗҫ унта шухӑшларӑм ун чухне, – иртнине аса илчӗ Валентина Ивановна. – Тепӗр, ывӑлӑмсене патшалӑх хӳтте илчӗ, вӗсем лайӑх ҫын пулса ҫитӗнчӗҫ. Мухтав турра: пурте тӗрӗс-тӗкел пурӑнаҫҫӗ».

Асли Николай /1970/ – амӑшӗн тӗревӗ. Сергей /1972/ ҫемйипе Санкт-Петербургра тӗпленнӗ. Мӑшӑрӗпе Иринӑпа /вӑл та Куславккаран, интернатра пӗрле вӗреннӗ/ пӗр ача ҫитӗнтереҫҫӗ. Владимир /1975/ – подполковник, УФСИН тытӑмӗнче ӗҫлет. Хусан ҫар-медицина институтӗнчен вӗренсе тухнӑскер ҫамрӑк чухне футболист пулнӑ. Чи кӗҫӗнни – Алексей /1978/, пичӗшӗ пекех спортсмен. Кире пуканӗ йӑтас енӗпе Раҫҫей спорт мастерӗ, ҫарпа спорт институтӗнче пӗлӳ илнӗ. Халӗ Мускавра пурӑнать.

Амӑшӗпе пӗр хуларах пулнӑран ывӑлӗсем киле час-час хӑнана сӗренӗ. «Кашни каникулта кун килетчӗҫ ачасем, дачӑра ӗҫлеме пулӑшатчӗҫ. Володя уйрӑмах тӑрӑшуллӑччӗ, вӑл тума пӗлмен ӗҫ те ҫукчӗ. Сергей ертсе пыма юрататчӗ, виҫҫӗмӗш те ун хыҫҫӑн сӗретчӗҫ. Пуринчен те пӗчӗкрех пулин те хастарччӗ, хӑюллӑччӗ, пӗтӗм ҫӗре кӗрсе тухма пултаратчӗ. Ҫавӑнпах кире пуканӗ йӑтма тапратнӑччӗ, ыттисем унран тӗслӗх илетчӗҫ», – хӗпӗртсе калаҫрӗ Валентина Ивановна. Тӑваттӑшӗ те туслӑ пурӑннӑ, хирӗҫесси сайра пулкаланӑ пӗр тӑвансен. Халӗ те пӗр-пӗрне тӗл пулсан калаҫмалли сахал мар вӗсен.

«Ывӑлӑмсем спортсмен пуласса шухӑшламан та. Кире пуканне йӑтма пуҫланине пӗлсен те хирӗҫлемерӗм: арҫын ачан вӑйлӑ пулмалла. Тӑван ҫӗр-шыва хӳтӗлемелле тесе пиллерӗм. Маттур, ӑслӑ-тӑнлӑ вӗсем, мухтанатӑп ачасемпе. Хӑйсен ӗмӗт-тӗллевне пурнӑҫласа ӗҫре ырӑ ят илчӗҫ», – сӑмахне малалла тӑсрӗ кинемей. Анчах ватӑ ҫынна ывӑлӗсен ҫемье пурнӑҫӗ ӑнманни пӑшӑрхантарать. Пӗртен пӗр мӑнукӗ Егор /Сергей Кирилловӑн ывӑлӗ/ асламӑшне тепӗр парнелет. 5-ри шӑлӑрлана курсан ӑна ачашламасӑр, ҫупӑрламасӑр чӑтаймасть.

■ Андрей МИХАЙЛОВ

Пӗлме

Сергей Александрович КИРИЛЛОВ – кире пуканӗ йӑтас енӗпе СССР спорт мастерӗ /1991/, спортӑн тӗнче класлӑ мастерӗ /1995/, Раҫҫей спорчӗн тава тивӗҫлӗ мастерӗ /2004/. Чӑваш Ен чемпионӗ, ҫӗр-шыв кубокӗн ҫӗнтерӳҫи /1997-1999, 2007/, Раҫҫей чемпионӗ /1999, 2000/, тӗнче кубокӗн призерӗ тата ҫӗнтерӳҫи /1998-2002/, тӗнче чемпионӗ /2004/. Ленинград ҫар институтӗнчен вӗренсе тухнӑ /1994/, хула ҫар округӗн спорт клубӗн аслӑ тренерӗнче ӗҫленӗ, халӗ – РФ пӗрлештернӗ командин тӗп тренерӗ.

Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗн Администрацийӗ Чӑваш АССР Аслӑ Канашӗн вун пӗрмӗш суйлаври депутачӗ /1985-1990/, Чӑваш АССР ял хуҫалӑх министрӗн ҫумӗ /1986-1994/, «Чебоксарские семена» акционерсен хупӑ обществин генеральнӑй директорӗ /1994-2006/

Илья Владимирович НЯГИН

вилнӗ пирки чӗререн хурланнине пӗлтерет.

Чӑваш Республикин Патшалӑх Канашӗ Чӑваш АССРӗн вун пӗрмӗш суйлаври Аслӑ Канашӗн депутачӗ

Илья Владимирович НЯГИН

вилнӗ пирки унӑн тӑванӗсемпе тата ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле чун-чӗререн хурланнине пӗлтерет.

Патӑрьел район администрацийӗ райӗҫтӑвком председателӗ /1976-1985/, Ленин орденӗн кавалерӗ, РФ Ял хуҫалӑхӗн тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ

Илья Владимирович НЯГИН

вилнӗ пирки унӑн ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле чун-чӗререн хурланнине пӗлтерет.

ЧР ял хуҫалӑх министрӗн ҫумӗ /1986-1994/, Чӑваш АССРӗн Аслӑ Канашӗн депутачӗ /11 суйлав/, яваплӑ тӗрлӗ ӗҫре нумай ҫул чысларӑн ӗҫленӗ

Илья Владимирович НЯГИН

вилнӗ пирки унӑн ҫывӑх тӑванӗсемпе пӗрле чун-чӗререн хурланнине пӗлтеретпӗр.

Платоновсен ҫемйи.

Чӑваш Республикин Аслӑ сучӗ, Суд департаменчӗн Чӑваш Республикинчи – Чӑваш Енри управленийӗ, районсен тата Ҫӗнӗ Шупашкар хула сучӗсен судйисем, Чӑваш Республикин мирови судйисем Чӑваш Республикин Патӑрьел район сучӗн отставкӑри судйи

Николай Васильевич ТАРАСОВ

вилнӗ пирки унӑн тӑванӗсемпе тата ҫывӑх ҫыннисемпе пӗрле чун-чӗререн хурланни ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

чӑваш халӑх хаҫачӗ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧӐВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧӖ, "ХЫПАР" ХАҪАТ РЕДАКЦИЙӖ

Директор-тӗп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторӗ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тӗп редактор ҫумӗ-коммерци директорӗ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор - тӗп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тӗп редактор ҫумӗ/
С.Л.ПАВЛОВ /тӗп редактор ҫумӗ/
Н.Г.СМИРНОВА
Ф.П.ЧЕРНОВ
Дежурнӑй редактор В.Н.БАГАДЕРОВА

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧӖ, 13, ПИЧЕТ ҪУРЧӖ, III ХУТ, "ХЫПАР".
hypar2008@rambler.ru
Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта: hypar1@mail.ru hypar@mail.ru
РЕКЛАМӐПА ПӖЛТЕРӲСЕНЕ 816-мӗш пӳлӗмре йышӑнаҫҫӗ. Тел. 28-83-70.
Тираж 7401. Заказ 1988.